...-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус

1943 июнь 30 юнкун 134(6871) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленсе çитнине тĕплĕн пăхса тухар!

Ыран пирĕн республикăра машинно-тракторнăй станцисенче колхозсене тырпулсене пухса кĕртме мĕнле хатĕрленсе çитнине пăхса тухас ĕç пуçланать. Çак ĕç ВКП(б) Обкомĕн XV-мĕш пленумĕ йышăннă тăрăх пулса иртет.

Пирĕн республикăри колхозсемпе совхозсем умĕнче кăçал çул хăйсене [illegible] тырпулсене [illegible] пухса кĕртесси. [illegible] Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне алăра тытакан орденлă республикăн чысне татах та çӳлерех çĕклемелле.

Тырă вырма тухаччен шутлă кунсем юлчĕç. Тырпулсене вăхăтра тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртесси пирĕн колхозсемпе совхозсем тата машинно-тракторнăй станцисем çав ĕçе тума мĕнле хатĕрленсе çитнинчен килет. Уборка вăхăтĕнче кашни колхозпа МТС-ра тĕл пулма пултаракан йывăрлăхсене халех тĕплĕн шута илмелле, ялхуçалăхĕнчи çакă питех те пысăк ĕçсене пурнăçа кĕртме мĕн кирлине пурне те тунипе туманнине тĕплĕн тĕрĕслесе тухмалла. Çавăнпа та ĕнтĕ çак тĕрĕслӳ уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăрать.

МТС-сем уборкăна мĕнле хатĕрленсе çитнине парти райкомĕн е райисполкомăн представителĕнчен, МТС директорĕнчен, механикран, опытлă та пултаруллă комбайнерсемпе тракторыстсенчен тата ăмăртакан МТС-сен представителĕсенчен тăракан комиссисем тĕрĕслесе тухаççĕ. Тĕрĕслӳ комиссийĕсен тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленес ĕçри пĕр ыйтуран та пăрăнса иртсе каймалла мар. Комисси членĕсен комбайнсене, уборка машинисене тата комбайнсемпе ĕçлеме уйăрнă тракторсене ĕçре тĕрĕслесе пăхса, актсем тăрăх йышăнмалла. Пĕр-пĕр машинăна начар юсани палăрсан, ăна çийĕнчех çĕнĕрен юсама тăратмалла.

Çакăнпа пĕрлех комиссисен куçса çӳрекен мастерскойсене, комбайнсем çумне зерноуловительсем, пучахсене çĕклесе пыракан, улăма купа туса хăваракан хатĕрсем лартнине пăхса тухмалла. МТС-ăн горючипе сĕрмелли çусем мĕн чухлĕ çителĕклине, çавăн пекех механизаторла кадрсем мĕн чухлĕ çителĕклине тĕрĕслесе тухмалла, палăрнă çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерме мĕн кирлине пурне те тумалла.

Тĕрĕслӳ итогĕсене МТС работникĕсен пĕрлешӳллĕ пухăвĕсенче сӳтсе-явмалла, мĕнпур работниксене [illegible] çитменлĕхсене пĕтерме мобилизацилемелле.

Колхозсен тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленсе çитнине тĕрĕслесе тухас [illegible] вырма çĕрте [illegible] вак-тĕвек ĕç хатĕрĕсене те — миххĕсемпе шăналăксене, амбарсемпе кĕлетсене, витнĕ итемсене, тырă типĕтмеллисене мĕнле хатĕрлесе çитернине, колхоз çынсемпе туртăм вăйне ĕçĕн татса паракан участокĕсем тăрăх мĕнле вырнаçтарса тухма палăртнине тимлĕн тĕрĕслесе тухмалла. Тĕрĕслӳ комиссийĕсен çавăн пекех тата колхозсем ача яслисемпе площадкисене уçма мĕнле хатĕрленнине, тырпулсене мĕнле çумланине, комбайнпа ĕçлеме тата жнейкăсемпе вырма мĕнле участоксем уйăрса панине пăхса тухмалла. Кашни колхоз тырпулсене тăккаласшине хирĕç мĕнле кĕрешме хатĕрленнине çине те тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Комисси куçĕнчен пĕр çитменлĕх те пытанса юлмалла мар.

Тĕрĕслӳ результачĕсене колхозниксен пĕрлешӳллĕ пухăвĕсенче, парти райкомĕсемпе райисполкомсен ларăвĕсенче, тĕрĕслӳ ĕçĕ пур колхозсенче те вĕçленнĕ хыççăн — колхоз председателĕсен районри канашлăвĕсенче сӳтсе-явмалла. Çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе çирĕп мерăсем йышăнмалла.

Парти райкомĕсемпе райисполкомсен кая юлакан колхозсем çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхас пулать, вĕсене уборкăна хатĕрленсе çитме ĕçлĕн пулăшмалла.

МТС-семпе колхозсем уборкăна хатĕрленсе çитнине пăхса тухасси — пысăк та ответлă ĕç. Çак ĕçе МТС работникĕсемпе ялхуçалăх специалисчĕсене, ялти коммунистсемпе комсомолецсене тата колхозниксене анлăн явăçтармалла. Районри пичет тĕрĕслӳ ĕçĕ мĕнле пынине куллен çутатса пыма тивĕçлĕ.

МТС-семпе колхозсем уборкăна хатĕрленсе çитнине тĕрĕслесе тухас ĕçе фронтри пек организованно туса иртерер! Кашни МТС-па кашни колхоза вăрçă вăхăтĕнчи вăйлă тырпула пухса кĕртме тĕплĕн хатĕрлесе çитерер!

Тырпула пухса кĕмелли машинăсене хăвăртрах юсамалла

Июнĕн 25-мĕшĕ тĕлне республикăра Шăхасан МТС-ĕ çеç комбайнсене юсас ĕçе ăнăçлăн пурнăçларĕ. Çак ĕç Йĕпреç, Хĕрлĕ Чутай, Элĕк, Елчĕк районĕсенчи МТС-сенче те тивĕçлĕ хăвăртлăхсемпе пулса пырать. Ку МТС-сем комбайнсене юсамалли плана 77—88 процента çити пурнăçланă. Чкаловски, Пăрачкав, Улатăр, Тăвай, Ишлей МТС-ĕсем вара комбайнсене юсамалли плана халĕ те 15—30 процент чухлĕ çеç тултарнă.

Июнĕн 1-мĕшĕнче республикăра колхозсемпе МТС-сем тырпула пухса кĕртме мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслес ĕç пуçланать. Кая юлнă районсенчи партипе совет организацисен, МТС директорĕсен комбайнсене юсас ĕç çине халĕ уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла, июнĕн 15-мĕшĕ тĕлне комбайнсене пурне те тĕплĕн юсаса тырă вырма хатĕрлесе çитермелле.

Çавăн пекех тырă вырмалли машинăсене юсас ĕç колхозсенче те халĕ çителĕксĕр пулса пырать. Анчах тырпулăн пĕтĕм лаптăкĕн 80 процентне кăçал жнейкăсемпе тата косилкăсемпе вырса пухмалла пулать. Çавăнпа та халĕ кашни колхозăн хăйĕн машинисене тĕплĕн юсаса хумалла. Пур машинăсене те туллин усă курса ĕçлетерме хатĕрленсе çитмелле. Анчах Красноармейски районра çак ĕç халĕ япăх пулса пырать-ха. Июнĕн 25-мĕшĕ тĕлне Красноармейски районра 179 жнейкăран 66-шне, 92 молотилкăран 32-шне, 28 косилкăран 12-шне çеç юсанă. Витнĕ итемсене пĕр колхозра та юсама пытăнман. Çав вăхăтрах райçĕрĕç пайĕн руководителĕ Алексеев юлташ Наркомзема тĕрĕс мар сведенисем парса тăрать.

Жнейкăсемпе косилкăсене юсас ĕç çавăн пекех Советски районра та япăх пырать. Колхозсенче 189 жнейкăпа косилка пур пулсан, халĕ 43-шне çеç юсанă. Республикипе илсен, июнĕн 25-мĕшĕ тĕлне жнейкăсемпе косилкăсене юсамалли плана мĕнпурĕ те 40 процент çеç пурнăçа кĕртнĕ.

Совет Союзĕн маршалне, Оборонăн Государственный Комитечĕн Председательне Иосиф СТАЛИНА

МУСКАВ

Поляксен Тадеуш Костюшко ячĕпе тăракан дивизийĕн ячĕпе тата хамран Сире, гражданин Маршал, пире салам янăшăн хĕрӳллĕн тав тăватăп.

Вăйлă та никама пăхăнса тăман Польшăна çĕнĕрен туса хурас шанчăк Совет Союзĕ пулăшсан кăна пурнăçа кĕме пултарнине эпир çирĕп ĕненсе тăратпăр.

Тăшмана аркатса тăкас тĕлĕшпе хамăр обязанноçсене чыслăн та тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пыма сăмах паратпăр.

Советсемпе поляксене туслăн пурăнтарас килни пирĕн чĕресене тарăн кĕрсе вырнаçнă. Çав туслăха çирĕплетмешкĕн эпир хамăрăн пĕтĕм вăя парăпăр тата вăйлă та никама пăхăнса тăман Польша туса хурас ĕçре пире Совет Союзĕ пулăшса тăнишĕн яланах тав туса асăнăпăр, тесе Сире, гражданин Маршал, сăмах паратпăр.

С. БЕРЛИНГ, А. СИВИЦКИЙ, КИНЕВИЧ, СОКОРСКИЙ тата Тадеуш Костюшко ячĕпе тăракан дивизийĕн пĕтĕм личнăй составĕ алă пуснă.

Асăрхаттарни: Тадеуш Костюшко ячĕпе тăракан дивизин личнăй составĕ Совет Союзĕн Маршалне, Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председательне И. В. Сталина янă çырăва центрти хаçатсенче июнĕн 29-мĕшĕнче поляк чĕлхипе тата вырăсла пичетлесе кăларнă.

РСФСР Верховный Совет Президиумĕнче

РСФСР Верховный Совечĕн суйлавĕсене тăсасси çинчен

РСФСР Верховный Совет Президиумĕ çапла йышăннă:

Вăрçă вăхăтне кура, РСФСР Верховный Совечĕн суйлавĕсене тата тепĕр çуллăха тăсас.

Çав вăхăта РСФСР-ĕн пĕрремĕш созыври Верховный Совечĕн полномочийĕсене тăсас.

ВЫРĂНТИ ТАТА КООПЕРАЦИ ПРОМЫШЛЕННОÇНЕ ЕРТСЕ ПЫРАССИНЕ ВĂЙЛАТМАЛЛА

А. МАТВЕЕВ,
Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕ.

Кăçалхи пилĕк уйăх хушшинче Чăваш республикин районĕсенчи промышленность плана 120 процент, промысла кооперацийĕпе инвалидсен кооперацийĕ—108 процент чухлĕ пурнăçа кĕртрĕç. Çакăн пирки ĕнтĕ выранти тата кооперации промышленноçĕн хăшпĕр руководителĕсем çитĕнӳсем çинчен калаçса лармаа та пăхаççĕ. Çавăн пек калаçусем вара работниксене лăплантараççĕ, халăх хуçалăхĕн çав отраслĕсенчи пысăк çитменлĕхсене курма чăрмантараççĕ.

Пĕтĕмĕшлĕ цифрăсем хыçĕнче мĕн пытанса тăрать-ха? Ассортиментсем тăрăх плана начар пурнăçлани пытанса тăрать. Туса кăлармалли япаласен ассортиментне пĕчĕклетсе план тунă пулин те, чылай предприятисемпе промартельсем ăна пурнăçа кĕртеймерĕç. Çапла, сăмахран, районри промкомбинатсем плана 27 япаларан 13 япала тăрăх, апат-çимĕç комбиначĕсем 23-рен 7 япала тăрăх, промсоюзсем 44-ран 5 япала тăрăх, древпромсоюз 40-рен 14 япала тăрăх, швейпромсоюз 14-ран 3 япала тăрăх, тарпромсоюз 27-рен 2 япала тăрăх тата коопинсоюз 39-тан 12 япала тăрăх кăна пурнăçа кĕртнĕ. Анчах та предприятисемпе артельсем паман япаласене тума ытлашши дефицитлă чĕртаварсем те, ятарласа тунă оборудованисемпе ĕç хатĕрĕсем те кирлех мар. Ассортимент тăрăх плана пурнăçа кĕртменнин сăлтавĕ—выранти тата кооперации промышленноçĕн хăшпĕр работникĕсем государство дисциплинине çителĕксĕр пăхăнса тăни, ĕççыннисемпе колхозсен нушисем çине сӳрĕккĕн пăхни пулса тăрать. Элĕк, Комсомольски, Первомайски, Сĕнтĕр, Пăрачкав тата Çĕмĕрле районĕсенчи предприятисемпе артельсем кăçалхи çул колхозсем валли пĕр пĕкĕ те туса паманнине ĕнтĕ çакăнпа кăна ăнлантарса пама пулать. Катка-пичке тăвас тĕлĕшпе тахçанах чапа тухнă Çĕмĕрле районĕ те 45 пичкепе катка кăна туса кăларнă, план тăрăх 785 катка-пичке тумалла пулнă. Çава хăйрамалли лапаткасем хатĕрлес тĕлĕшпе Куславкка, Кувакино, Сĕнтĕрвăрри, Сĕнтĕр, Шăмăршă тата Çĕмĕрле районĕсем нимĕн те туман. Промсоюз артелĕсем тимĕртен вак-тĕвек япаласем, кӳлмелли хатĕрсем, тӳмесем, чӳлмексем, кирпĕч, известь, йывăç подошвăллă атă-пушмак туса кăларассине пурнăçа кĕртмеççĕ. Апат-çимĕç комбиначĕсем пахча-çимĕçсем типĕтмелли плана тултарман. Кун пек чухне, паллах, çитĕнӳсем çинчен калаçмалли те çук.

Япаласен хакĕ тĕлĕшпе пилĕк уйăхри плана, пуринчен ытларах, пĕрремĕш кварталра ăнăçлăн ĕçленипе пурнăçа кĕртнĕ. Апрельпе май уйăхĕсенче вара ĕç хăвăртлăхне чакарнă, çавна пула артельсемпе предприятисем миллионшар тенкĕлĕх продукци парайман.

Çакă вăл предприятисемпе артельсем хĕллехи вăхăтра хăйсене валли йывăç тата вутă хатĕрлесе хуманнинчен, вĕсен запасĕсене çулталăкăн малтанхи уйăхĕсенче расходласа пĕтерниинчен килнĕ. Малаллине курма пĕлмен хăшпĕр руководительсем, пĕрремĕш квартал планне пурнăçа кĕртнипе лăпланса, предприятисемпе артельсен ĕçне çураки вăхăтĕнче ертсе пыма пăрахнă. Сĕнтĕрвăрри пек малта пыракан районсен опычĕ пачах урăххине, çине тăрса ĕçлесен ялхуçалăх енĕпе те, промышленность енĕпе те çитĕнӳсем тума май пуррине кăтартса парать.

Плана пĕтĕмĕшлĕн тултарнине кăтартакан цифрăсем хыçĕнче выранти е кооперации промышленность планĕсене пурнăçа кĕртмен районсемпе хуласем сахал мар пытанса тăраççĕ. Ишлей, Комсомольски, Хĕрлĕ Чутай, Элĕк, Калинино тата Шупашкар районĕсем плана—артельсем тăрăх, Красноармейски, Первомайски, Советски, Сĕнтĕр тата Вăрмар районĕсем плана—выранти промышленность енĕпе пурнăçа кĕртмен. Йĕпреç, Пăрачкав, Елчĕк районĕсем вара плана выранти промышленность енĕпе те, кооперации промышленноçĕ енĕпе те пурнăçа кĕртмеççĕ, пилĕк уйăх хушшинче вĕсем çĕршывпа ĕççыннисене кирлĕ таварсем 700.000 тенкĕлĕх ытла парса çитереймен. Кун пек япăх ĕçленине малашне тӳсме çук!

Выранти тата кооперации промышленноçĕ ĕççыннисене атă-пушмаксем, тумтирсем, куллен кирлĕ япаласем юсаса парас тĕлĕшпе питех те начар ĕçлет. Шупашкарти „Кожупряжь“ артельре, сăмахран, пĕлтĕрхи ноябрь уйăхĕнче панă заказсем халĕ те пурнăçа кĕмесĕр выртаççĕ. Йĕпреç районĕнче пилĕк уйăх хушшинче пĕтĕмпе те 100 мăшăр атă-пушмак, Ишлейпе Калинино районĕсенче—300-шер мăшăр атă-пушмак кăна юсаса панă. Урапа таврашсемпе кӳлмелли хатĕрсем юсамалли плана та пачах çителĕксĕр пурнăçланă.

Выранти тата кооперации промышленноçĕн ĕçне продукци туса кăларни тăрăх кăна мар, çавăн пекех тата производствăна малалла аталантарса пыни тăрăх та, çĕнĕ мастерскойсемпе цехсем, предприятисем уçни тăрăх та хаклаççĕ. Кăçалхи апрелĕн 7-мĕшĕнче Совнаркомпа Обком Сĕнтĕрвăррипе Çĕмĕрле районĕсенче тир-сăран тăвакан икĕ завод уçасси çинчен, Йĕпреç, Калинино, Куславкка, Хĕрлĕ Чутай, Кувакино, Сĕнтĕрвăрри, Советски, Сĕнтĕр, Шăмăршă, Çĕмĕрле районĕсенче, çавăн пекех тата Улатăрпа Канаш хулисенче апат-çимĕç предприятийĕсенче çĕнĕрен 12 цех уçасси çинчен решени йышăннăччĕ. Анчах наркоматсем те, районсен руководителĕсем те çав ыйтупа нимĕн те тумарĕç, пĕр цех та, пĕр предприяти те организацилемерĕç.

Куллен кирлĕ таварсем туса кăларас тĕлĕшпе выранти топливо промышленноçĕн Управленийĕ, Чăвашпотребсоюз, Чăвашторгпа Наркомлес пек ведомствăсем те пачах çителĕксĕр ĕçленĕ.

Выранти промышленность наркомĕ Егоров, апат-çимĕç промышленность наркомĕ Калинкина, промкооперации Управленийĕн уполномоченнăйĕ Степанов юлташсем тата районсемпе хула совет исполкомĕсен председателĕсем пĕрремĕш кварталти çитĕнӳсене çирĕплетсе хăвармарĕç, малашне ĕç çавăн пекех, хăйсем хутшăнмасăрах тикĕс каяссине шанса, ĕçе ертсе пырассине вăйсăрлатрĕç. Анчах та халĕ çанă таварса ĕçлени кирлĕ, ĕçе пĕтĕм вăйран тытăнмалла, плана ассортимент тăрăх пурнăçа кĕртессишĕн тăрăшмалла.

Хăшпĕр районсен руководителĕсем, пуринчен малтанах райсовет исполкомĕсен председателĕсем, çуракинче ĕç нумайри çине тӳнтерсе, предприятисемпе артельсене ертсе пырассинчен пăрăнчĕç. Çĕмĕрле районĕнчи апат-çимĕç комбиначĕн питех те лайăх производство никĕсĕ пур, унăн склачĕсенче урпа, сăнăх тата авăртман тулă темиçе тоннăшар выртать. Анчах комбинат плана пурнăçа кĕртмерĕ. Райисполком председателĕн выранти промышленность енĕпе ĕçлекен заместителĕ Хренов юлташ — „Çĕмĕрлере... шывпа вутă çук“ тесе, çавăн пек йĕркене законлах тесе шутлать. Хурăн шывĕпе вĕрене шывне тата эмель курăкĕсене пухас тĕлĕшпе, çавăн пекех тата хăйĕн продовольстви базине тăвас тĕлĕшпе апат-çимĕç комбиначĕ пачах та ĕçлемест. Çĕмĕрлере... тăм çук пирки чӳлмек тăвас ĕçе йĕркелеме май çук тесе шутлаççĕ. Районри промкомбинат плана ассортимент тăрăх тăтăшах пурнăçа кĕртсе пымасть, хăйне валли йывăç чĕртаварĕ хатĕрлесе хуман, подсобнăй хуçалăхра çураки ирттермен, райисполком председателĕ Носков юлташ вара промкомбинатăн тăватă лашине çураки тума колхозсене янă. Çак тĕслĕхсенчен ĕнтĕ выранти советсен хăшпĕр руководителĕсем выранти тата кооперации промышленность ĕçĕшĕн хăйсен ответлăхне туйманни, конкретнăй задачăсене татса парассинчен пăрăнса тăни курăнать.

М. И. Калинин юлташ нумаях пулмасть çапла çырчĕ: „Союзри промышленность предприятийĕсен ĕçĕсемшĕн тивĕçлĕ наркомат ответлă пулса тăрать пулсан, выранти промышленность ĕçĕшĕн вара тӳрремĕнех Советсен руководителĕсем ответлă пулса тăраççĕ“. Çакна ĕнтĕ çирĕп асра тытмалла.

Предприятисемпе артельсене чĕртаварсемпе топливо хатĕрлесе парас ыйту çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Унсăрăн графикпа ĕçлеме çук. Тырă вырма тухачченхи кунсемпе усă курса, чĕртаварсемпе вутă çителĕклĕ таран хатĕрлесе памалла, çак ĕçе предприятисемпе артельсенчи мĕнпур ĕç вăйĕпе туртăм вăйне куçармалла. Çакăнпа пĕрлех промышленноçа колхозсем енчен хăйсен ирĕкĕпе туртăм вăйĕ парса пулăшмалла.

Çавăн пекех тата чĕртаварсемпе материалсене, топливăна тĕрĕс сыхласа усрассине организацилемелле. Чĕртаварсемпе топливо мĕнле сыхланса усранине тата вĕсемпе мĕнле усă курнине наркоматсен, союзсен, районсемпе хула совет исполкомĕсен кулленех тĕрĕслесе тăрас пулать. Хирте е вăрманта ӳсекен çимĕçсене пухса хатĕрлессине анлăн сармалла, çак ĕçе вĕренекенсемпе инвалидсене явăçтармалла, пысăк предприятисенчи отходсемпе туллинрех усă курмалла, республикари научнăй вăйсем пулăшнипе чĕртаварсемпе материалсене урăх япаласемпе улăштармалли майсем тупмалла.

Выранти тата кооперации промышленноçне ĕç вăйĕ тупса парас ĕçре ытлашши мобилизацисем тума тытăнаççĕ. Предприятисемпе артельсен пур пек рабочисене тухăçлăнрах ĕçлеттермелле, рабочисен пурнăçпа йăла условийĕсем çине тимлĕнрех çавăрăнса пăхас пулать, производствăра йĕрке тăвас пулать, çынсене, ĕç тухăçлăхĕ ӳссе пынă май, ытларах ĕçлесе илме май парас пулать.

Пирĕн çынсене киле ĕç парас майсемпе çителĕксĕр усă кураççĕ. Колхозсенче ватă çынсемпе инвалидсем сахал мар, вĕсем уйхир ĕçĕсене хутшăнаймаççĕ, анчах килте сахал мар япаласем тума пултараççĕ. Кунта ĕç ăнăçлăхĕ пĕтĕмпех предприятисемпе артель руководителĕн пуçарулăхĕнчен килет.

Ĕç дисциплинине тĕпренех çирĕплетмелле. Тарпромсоюзăн чылай артелĕсенче (Красноармейски, Çĕрпӳ районĕсенче) киле панă ĕçе ĕçлетпĕр тесе, çынсем ĕç повинноçĕнчен пăрăнса юлаççĕ, ĕç нормисене тултараймаççĕ. Çавсем пирки нимĕнле мерăсем те йышăнни çук.

Хăшпĕр районсенче предприятисемпе артельсен ĕçĕ райисполком председателĕн выранти промышленность енĕпе ĕçлекен заместителĕ çук пирки япăх пырать тесе калаççĕ. Ку тĕрĕс мар. Райсовет исполком председателĕсен тата райплан председателĕсен выранти тата кооперации промышленность тĕлĕшпе хăйсен ытларах ĕçлемелле. Тепĕр енчен, райисполком председателĕсен выранти промышленность енĕпе ĕçлекен заместителĕсемпе ĕçре тĕрĕс мар усă курнине те кăтартса памалла. Вĕсене хăйсен тĕп обязанноçĕсемпе çыхăнман нумай тĕрлĕ ĕçсем хушаççĕ. Çапла, сăмахран, Елчĕк районĕнче Кузьмин юлташа ĕçе уйăрса лартнă хыççăн тепĕр куннех хăйĕн тĕп ĕçĕпе çыхăнман командировкăна нумай вăхăтлăха янă. Çавнах каламалла Вăрнарпа Çĕмĕрле районĕсем пирки те. Паллах, ялхуçалăх ĕçĕсен е вăрман хатĕрлевĕн татăклă тапхăрĕсенче промышленность работникĕсене çав ĕçсене явăçтарма пултараççĕ, çавăн пекех ытти ĕçсенче ĕçлекенсене те, кирлĕ пулсан, промышленноçа пулăшнă çĕре явăçтармалла. Кунта ĕçе выранти условисене кура йĕркелени кирлĕ.

Выранти тата кооперации промышленноçĕнче социализмлă ăмăртăва çителĕксĕр йĕркеленĕ. Нумай райсовет исполкомĕсем уйăхри ăмăрту итогĕсене кашни уйăхăн 3-мĕш е 4-мĕш числисенчен кая юлмасăр хăйсен ларăвĕсенче сӳтсе-явма тивĕçли çинчен Совнарком йышăннă постановление пурнăçа кĕртмеççĕ. Малта пыракан районсен опычĕ ăмăрту итогĕсене кашни уйăхрах пĕтĕçтерсе пыни предприятисемпе артельсен ĕçне лайăхлатма пулăшнине кăтартса парать. Ăмăртура мала тухакансене хавхалантармалли майсемпе районсенче çителĕксĕр усă кураççĕ. Çак ĕçре районсенчи куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавсемпе усă курма май пур. Исполком е предприятипе артеле ертсе пыракансем ăмăртура малта пыракансене тав туни, ĕç кĕнеки çине палăртни, районри Хисеп хăми çине кĕртни тата ытти майсем те ĕçе чылай пулăшма пултараççĕ. Кунта выранти пичет те пысăк вырăн йышăнса тăрать.

1943 çулхи иккĕмĕш çурçул планне выранти тата кооперации промышленноçĕ тăрăх республикăри пур районсемпе хуласен те, мĕнпур предприятисемпе артельсен те хак енĕпе кăна мар, уйрăмах тата ассортимент енĕпе пурнăçа кĕртмелле. Вăя икĕ хут ӳстерсе ĕçлемелле, рабочисен сахал йышĕпех нумай продукци туса кăлармалла,—çакăн пек ĕçлеме ыйтаççĕ тăван çĕршывпа фронт.

Ылханлă тăшмана çапса аркатма, ăна хамăрăн çĕршывран шăлса ывăтма паттăр Хĕрлĕ Çара выранти тата кооперации промышленность работникĕсен хăйсен вăйĕсене хĕрхенмесĕр ĕçлесе, куллен пулăшса пырас пулать

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июнĕн 28-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Июнĕн 28-мĕшĕнче фронтра палăрнă улшăнусем пулман.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче сайра-хутра артиллерирен тата пăшалсемпе пулеметсенчен перкелесе тăнă. Пĕр çĕрте артиллеристсем 9 блиндаж çĕмĕрнĕ, пĕр орудие, 5 пулемет пĕтерсе тăкнă. Пирĕн подразделенисем çапăçса разведка тунă, темиçе çынна тыткăна илнĕ. Пĕр участокра пирĕн пĕр пысăк разведка тăвакан отрячĕ тăшман траншейисене кĕрсе кайнă; 30 гитлеровеца вĕлернĕ, трофейсем тытса илнĕ, вара пĕр сухатусăрах хăйсен чаçне каялла çавăрăннă.

* * *

Изюмран кăнтăртаракра пирĕн боевой хурал Сурсĕр Донецăн сулахай енне каçакан нимĕç отрядне асăрханă. Совет боецĕсем гитлеровецсене тепĕр енне каçма чарман. Нимĕçсем хăйсене никам хирĕç тăманнине кура, хăвăрт малалла кайнă, унтан минăсем пурса тухнă вырăна пырса кĕнĕ. Темиçе гитлеровец минăсем сирпĕнсе кайнипе вилнĕ, ыттисем вара каялла юханшыв патнелле чупса кайнă. Пирĕн боецсем вĕсен çулне пӳлсе лартнă та çав отряда пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă.

Пирĕн зенитнăй артиллери тăшманăн 3 самолетне персе ӳкернĕ. Нимĕç самолечĕсемпе вĕсен экипажĕсем çунса кайнă.

* * *

Лисичанск районĕнче тăшман пехотин пĕр роти çапăçса разведка тума хăтланнă. Пирĕн подразделенисем нимĕçсене пăшалсемпе, пулеметсемпе пенĕ, нимĕçсен пралука сарса тухнă вырăн умĕнче çĕр çине выртмалла пулнă. Унтан пирĕн боецсем, штыкпа вĕçсĕн çапăçса, гитлеровецсене аркатса тăкнă. Тепĕр участокра пĕр часăн артиллеристсем 3 артиллери батарейине пусарса лартнă, 2 пулемет пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен пĕр рота таран пехотине саланса янă.

* * *

Ленинград облаçĕнче 7 кĕрешекен партизансен темиçе отрячĕ 10 кун хушшинчи пынă çапăçусенче гитлеровецсене пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă. Вĕсен пĕр танкне, çар грузĕсем тиенĕ 12 автомашинине тата 4 çăмăл автомашинине çунтарса янă. Партизансем хĕçпăшалсем, боеприпассем тата продовольстви нумай тытса илнĕ. Çав вăхăт хушшинче партизансем нимĕçсен 9 эшелонне ӳпĕнтерсе янă: 2 паровоз, салтаксем ларса пынă 14 вагон; орудисем тиенĕ 7 платформа, авиамоторсем тиенĕ 5 платформа, продовольстви тиенĕ 24 вагон, горючи тултарнă 4 цистерна тата тĕрлĕ çар грузĕсем тиенĕ 39 вагон çĕмĕрĕлнĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнчи пĕр участокра Хĕрлĕ Çар енне нимĕçсен 58-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи ефрейтор Стефан Т. каçнă. Вăл çапла каласа панă: «58-мĕш дивизи Демянск хуранĕнче питĕ пысăк сухатусем тӳсрĕ. Демянскран каялла чакнă чухне йышлă нимĕç масарĕсем умĕн иртсе пынă чухне салтаксем çилленсе çапла калатчĕç: «Мĕншĕн кунта пире çуратăлăк çурă тытса тăчĕç? Темиçе пин салтака парнене кӳрес тесе-им вара?» тетчĕç. Нумайĕшĕ халь нимĕç çарĕ пĕтес патнелле пынине ăнланма пуçларĕç. Салтаксен çапăçас шухăшĕ-кăмăлĕсем чакса пыраççĕ».

* * *

Украинăри партизансем Коростышевски районри нимĕç комендантне Фогт Армина вĕлернĕ. Ун çумĕнче нимĕçсен Коростышевски область комиссарĕ округĕсенче ялхуçалăх тĕлĕшпе ĕçлекен нимĕç уполномоченнăйĕсене тата облаçри опорнăй шкулсен руководителĕсене панă распоряжение тупнă. Çав распоряженире гитлерла пуçмăрçă çакна палăртать: темĕнле приказсем панă пулин те, Украинăри хресченсем çамрăк выльăхсене пусаççĕ. Германие ăсатма ашкакай памаççĕ. Нимĕç влаçĕсем халĕ çамрăк выльăха пуснăшăн асаплантарса вĕлермелли йĕрке тунă. Çав распоряженире тӳрех çапла каланă: «Малашне украинецсене çамрăк выльăхсене пуснăшăн чи пысăк наказанисем паратпăр. Айăплисене асаплантарса вĕлерес умĕнче те чарăнса тăмăп эпĕ», тенĕ.

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем украинăри мирлĕ пурăнакан хресченсене кирек мĕн тунăшăн та асаплантарса вĕлермелле йĕрке тумалла пулнă пулсан, вĕсен ĕçĕсем начар пулать вара. Нимĕç вăрă-хурахĕсем Совет Украинине нихçан та парăнтараймĕç.

* * *

Франци патриочĕсем нимĕç захватчикĕсемпе вăйлăрах кĕрешме пуçларĕç. Ирĕклĕ стрелоксем Сомм тата Эн каналĕсем çинчи сооруженисене сирпĕнтерсе янă. Пароходсене çав каналсемпе çӳреме икĕ уйăхлăха чарса лартнă. Амьен—Абвиль чугунçулĕ çинче патриотсем нимĕç салтакĕсем ларса пыракан поезда ӳпĕнтерсе янă. Аннонри авиамоторсем тăвакан заводра ĕçлекен рабочисем темиçе сложнăй машинăна электромоторпа юрăхсăра кăларнă.

Ялсенчи пуçламĕш парторганизацисен секретарĕсен республикăри канашлăвĕ

Июнĕн 28—29-мĕшĕсенче ВКП(б) Обкомĕ партин ялсенчи пуçламĕш организацийĕсен республикăри канашлуне ирттерчĕ. Канашлăва 130 çын ытла килнĕ.

Канашлура ВКП(б) Обкомĕн пĕрремĕш секретарĕ И. М. Чарыков юлташ «Ялсенчи пуçламĕш парторганизацисен ĕçне лайăхлатмалли мерăсем çинчен» доклад турĕ.

Чарыков юлташ ялсенчи пуçламĕш парторганизацисем мĕнле ĕçлени çинчен тĕплĕн чарăнса тăчĕ, вĕсен умне конкретнăй задачăсем кăларса тăратрĕ.

Ялсенчи парторганизацисем колхозсен, ялсоветсен, вулав çурчĕсен, шкулсен, больницăсен тата ытти учрежденисен ĕçне ертсе пымалла, ĕçпĕнисен анлă массисене хуçалăхпа политикăллă кампанисене ăнăçлăн ирттерме, государство умĕнчи мĕнпур парăмсене вăхăтра та йĕркеллĕ пурнăçласа пыма, фронта тĕрлĕ майсемпе пулăшса тăма мобилизацилемелле.

Халĕхи вăхăтра парторганизацисем умĕнче тырпулсене пахса çитĕнтерес, хура çĕртме тăвас, утă çулса хатĕрлес, тырпулсене пухса кĕме кăтартулăн хатĕрленес тата ялхуçалăх продукчĕсен хатĕрлевĕсене ăнăçлăн ирттерес ыйтусем тĕп вырăн йышăнса тăраççĕ. Ялсенчи коммунистсемпе комсомолецсемшĕн халĕ çак ĕçсенчен ответлăрах тата кирлĕрех урăх ĕç çук та темелле. Çавăнпа парторганизацисен хăйсен вăйĕсене ĕçĕн ăнăçлăхне татса паракан тĕп участоксенче вырнаçтарса тухмалла. Уйрăмăнах колхозниксем хушшинче массăллă-политикăллă ĕçе организацилесси çине тимлĕн çаврăнса пăхас пулать.

Чарыков юлташ малалла парти организацийĕсем комсомола епле ертсе пыни çинчен, ялсенчи çутĕç учрежденийĕсен ĕçĕсем çинчен, парти ретне ÿстерес ыйтусем çинчен тĕплĕн чарăнса тăчĕ.

Чарыков юлташăн доклачĕ тăрăх пренире 17 çын тухса каларĕç. Вĕсем хăйсен ĕçĕсемпе паллаштарчĕç, ĕçри чăрмавсене уçса парăртрĕç.

Канашлура ВЛКСМ Обкомĕн секретарĕ П. Михайлов юлташ тухса каларĕ. Вăл пуçламĕш парторганизацисем чылайĕшĕ комсомол организацийĕсен ĕçне тивĕçлипе ертсе пынине палăртрĕ. Çакăнпа пĕрлех вăл хăшпĕр парторганизацисем комсомол организацийĕсене сителенксĕр пулăшнине кăтартса пачĕ. Комсомолăн ялсенчи пуçламĕш организацийĕсен секретарĕсенчен 44 проценчĕ ертсе пырас ĕçе пуçламĕш хут хутшăннă. Вĕсен ертсе пырас ĕçри опыт сахал-ха. Вĕсем пуçламĕш парторганизацисенчен тата вĕсен секретарĕсенчен пулăшу кĕтеççĕ. Анчах çак пулăшăва вĕсем тивĕçлипе илеймеççĕ-ха.

Михайлов юлташ çавăн пекех çамрăксене коммунистла воспитани парасси çинчен те чарăнса тăчĕ.

Канашлу хупăнас умĕн Чарыков юлташ хăйĕн юлашки сăмахне каларĕ.

ВСЕВОБУЧ ПУНКТĔНЧЕ

ШАХАСАН. (Хамăр корреспондентсенчен). Боецсем ирех тăчĕç те зарядкăна кайрĕç. Ирхи апат хыççăн занятисем пуçланчĕç. Командир Иванов юлташ хăйĕн подразделенийĕнчи боецсене паянхи задачăсем çинчен каласа ăнлантарчĕ.

Боецсем хаваслă. Вĕсем пурте винтовкăпа пĕрремĕш хут переççĕ.

— Санăн çулахайри тĕрремĕш мишеньри фашиста лектермелле,—тесе хушать всевобуч пункчĕн начальникĕ Николаев Прохоренко боеца.

— Эпĕ пеме хатĕр, лейтенант юлташ,—тесе ответлет Прохоренко.

Вăл винтовкăна лайăх вырнаçтарчĕ те персе ячĕ. Пуля фашист кусĕнчен тивнĕ. Боец аллинче тата икĕ патрон. Вăл малтанхи результатшăн савăнчĕ. Прохоренко тепĕр икĕ патронне те тĕл печĕ. Хăвăрт тăрса мишень патне чупрĕ. Ун хыççăн командир та пычĕ.

— Маттур, Прохоренко! 30 очкоран 27 очко илнĕ.

Прохоренко юлташăн питĕнче савăнăç. Результатсем аван пулчĕç. Взводри 12 боец отлично паллăсем илчĕç. Райвоенкоматăн всевобуч енĕпе ĕçлекен старши инструкторĕ лейтенант Городецкий юлташ отличниксене тав турĕ.

Атнашри всевобуч пунктĕнчи боецсем вăрçă ĕçне лайăх вĕренсе пыраççĕ, вĕсенчен 30 проценчĕ «отлично», 30 проценчĕ—«хорошо» паллăсем илнĕ. Вĕренÿ пунктĕнче дисциплина çирĕп шекех çирĕп.

С. ШАДИН,
В. ВЕСЕЛОВ.

Колхозниксем çар ĕçне вĕренеççĕ

ИШЛЕЙ. Осоавиахимăн «МОПР» колхоз çумĕнчи пуçламĕш организацийĕ хăй ĕçне вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек пуса пырать. Пуçламĕш организаци председателĕ Владимиров юлташ тимлĕн ĕçленипе колхозниксем сывлăшран тапăнассине хирĕç кĕрешме вĕренчĕç. Владимиров юлташ кружок организацилесе унта колхозниксен кыçăк йышне явăçтарчĕ.

Халĕхи вăхăтра колхозниксем Ворошилов пек кĕл пеме вĕренеççĕ. Ку енĕпе те кружок организациленĕ. Кружокра пулемётăн, винтовкăн, ручной гранатăн чăçĕсене вĕренсе пĕтереççĕ. Кун хыççăн вара тĕл пеме вĕренмелли хăнăхусем пулаççĕ.

Н. Милютин.

Республика уйхирĕсенче

Республикăра çĕртме тăвас тата çум çумлас ĕç июнĕн 25-мĕшĕ тĕлне мĕнле пынине кăтартакан

СВОДКА

РАЙОНСЕМ	Çĕртме тунă (процентпа)	Тĕштырăсене çумлани (процентпа)	Техникăллă культурăсене çумлани (процентпа)	Пахча-çимĕçсемпе çĕрулми сене çумлани (процентпа)
Улатăр	97,2	26,8	12,1	8,1
Элĕк	79,5	53,4	29,9	2,7
Вăрнар	91,8	79,3	48,1	9,2
Йĕпреç	68,6	43,3	12,0	8,7
Ишлей	79,8	46,3	46,5	20,9
Калинино	79,7	40,5	69,8	36,6
Канаш	58,3	77,4	9,4	—
Куславкка	54,1	24,2	—	4,2
Комсомольски	58,8	41,5	44,1	8,7
Красноармейски	72,9	26,4	22,9	23,6
Хĕрлĕ Чутай	85,5	47,0	—	7,8
Кувакино	11,8	1,4	44,5	—
Сĕнтĕрвăрри	66,9	29,1	—	5,4
Октябрьски	74,1	36,9	26,2	2,7
Первомайски	33,4	35,3	16,3	2,8
Пăрачкав	19,6	37,3	64,1	1,4
Советски	68,7	71,7	17,1	36,3
Сĕнтĕр	85,4	31,8	68,2	4,7
Вăрмар	58,6	21,3	85,6	50,6
Çĕрпÿ	86,6	82,8	115,5	9,2
Шупашкар	108,0	40,6	100	11,4
Чкаловски	6[illegible]	51,5	—	—
Шăмăршă	52,5	43,2	24,3	21,6
Шăхасан	61,5	53,2	47,5	13,2
Çĕмĕрле	53,4	71,3	71,8	14,1
Етĕрне	100,3	34,0	36,8	51,7
Елчĕк	80,3	85,3	60,6	30,0
Тăвай	40,3	84,8	40,2	1,8
Шупашкар хули	103,7	59,6	—	59,2
ЧАССР тăрăх	66,5	43,4	42,4	18,5
Июнĕн 20-мĕшĕ тĕлне пулнă	49,3	38,9	34,9	6,6

Çамрăксем, çумкурăкĕсемпе кĕрешме!

Пенза облаçĕнчи комсомолецсем, колхоз çамрăкĕсем, пионерсемпе шкул ачисем патне М. И. Калинин юлташ янă çыру

Пенза облаçĕнчи комсомолецсем, колхозсемпе совхозсенчи çамрăксем тырпула лайăх пăхса ÿстерес ĕçĕн организаторĕсем пулса тăнă. Вĕсем çумкурăкĕсене хирĕç поход пуçарса янă.

СССР Верховный Совечĕн президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин юлташ патне çамрăксем хăйсем тырпула çумкурăксенчен тата ялхуçалăхне сиен кÿрекенсенчен сыхласа çинчен каласа çыру çырнă.

Михаил Иванович Калинин Пенза облаçĕнчи комсомолецсемпе колхоз çамрăкĕсем тата пионерсемпе шкул ачисем патне çакăн пек çыру янă:

«Хаклă юлташсем, эсир çумкурăкĕсене хирĕç массăллă поход пуçарса янни — государствăн пысăк ĕçĕ пулса тăрать. Эсир çамрăк вăй-халпа кĕрешсе, çумкурăкĕсене вăхăтра тата пĕтĕмпех тасатсан, Пенза облаçĕнчи колхозсемпе совхозсем ялхуçалăхĕнчи пур йышши культурăсене те ытларах пуса илесси паллах.

Чи пахи кунта çакă: çапла туса эсир фронта пулăшатăр, Хĕрлĕ Çара нумай тырă, çĕрулми, пахча-çимĕç хушса паратăр.

Ку ĕç çамăл ĕç марри паллах, кунта нумай çын вăйĕ кирлĕ пулать. Çавăнпа та ĕçре лайăх результатсем пулччăр тесе, ăна лайăх организацилемелле, май килнĕ таран çăмăллатмалла.

Сирĕн вăя çирĕппĕн шанса, сире пысăк çитĕнÿсем тума сунатăп.

М. КАЛИНИН».

28 колхоз утă çулма тухрĕç

СĔНТĔР. Июнĕн 29-мĕшĕ. (Телефонпа). Районра 28 колхоз утă çулма тухрĕç. Вĕсем шурĕ 170 гектар утă çулнă. Уйрăмăнах «Красное Сормово», «Новый путь», «Ленинский путь», «Майăн 1-мĕшĕ» колхозсем тата Чапаев ячĕпе тăракан колхоз малта пыраççĕ. Паянхи куна «Красное Сормово» колхоз 58 гектар, «Новый путь» колхоз 37 гектар утă çулнă. Колхозниксен ĕçлес хастарлăхĕ пысăк. «Майăн 1-мĕшĕ» колхозра Ф. Любимова, О. Николаева, 68 çулхи Д. Захаров юлташсем нормăна 150—180-шар процент тултарса ĕçлеççĕ.

Колхозра утă çулма тухсан малтанхи кунĕнчех столовăй ĕçлеме пуçларĕ. Унта колхозниксем кунне икĕ хутчен апатланаççĕ.

М. КАРПОВ.

Тухăçлăн ĕçлеççĕ

ВĂРНАР. Пирĕн колхозра ĕçлеме пултаракан кашни çын халĕ утă çулнă çĕрте. Ĕç хĕрÿллĕн пырать. Нумай колхозниксем ĕç нормине икшер хут ытла тултараççĕ. Акă илер Варвара Цыганова юлташа. Вăл кунсеренех 0,54 гектар клевер çулать. Нормăпа 0,25 гектар çулмалла. Çапла вăл ĕç нормине кулленех 216 процент пурнăçласа пырать. Çавăн пекех Михаил Сергеев та. Улăхри утта вăл талăкра 0,25 гектар таран çулать, нормăна 208 процент тултарать.

Тухăçлăн, хăвăрт ĕçлесси вăл ĕçе тĕрĕс йĕркелесе пынинчен нумай килет. Эпир утă çулас ĕçе хамăр колхозра тĕплĕн йĕркелерĕ. Кашни колхозник пирĕн уйрăмăн ĕçлет. Çакна пула ĕçре ăмăрту анлăн саралчĕ. Колхозниксем утта лайăх çулса пухассишĕн тупăшса ĕçлеççĕ. Иркине ĕçе кăвак çутăллах тухаççĕ те мĕн сĕм тĕттĕм пуличченех ĕçлеççĕ.

Выльăх-чĕрлĕх валли те, фронта памалăх та пирĕн кăçал утă çителĕклĕ пуласси çине эпир çирĕп шанатпăр, çакăншăн кĕрешетпĕр.

Я. ВАСИЛЬЕВ,
«Майăн 1-мĕшĕ» колхоз председателĕ.

Утă çулас ĕçе тăсса пыраççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Районра утă çулма тухнă колхозсем нумайланса пыраççĕ. Ку ĕçре малта пыракан колхозсем утта хăвăртрах çулса пухса кĕртессишĕн тăрăшаççĕ.

Янчеллĕ ялсоветĕнчи «Прогресс», «Победа», «Новая сила» колхозсем улăх утти çулма тухса ыран-виçмине çулса та пĕтереççĕ ĕнтĕ.

Çав вăхăтрах районри «Новое хозяйство», «Новый мир», «Унгострой» пек колхозсем паян кун та утă çулма хатĕрленсе çитмен. Çавасене туптаттарман, кĕреплесем те çителĕксĕр. Çакăн пек колхозсен руководителĕсене районри партипе совет организацийĕсем утă çулма халех тухасси çинчен темиçе хут та асăрхаттарнă.

Апла пулин те вĕсем утă çулма вăхăт çитмен-ха, тесе утă çулас ĕçе тăсса пыраççĕ.

Çавăн пек хăшпĕр колхозсем иртнĕ çулта та утă çулма кая юлса тухса района уборка ĕçĕнче чарса пычĕç.

Кун пек юлса пынине пĕтермелле. Утă çулма хăвăртрах тухмалла.

С. ШАДИН.

120 тонна силос хывнă

ШАХАСАН. (Хамăр корр.). Ямашри «Ударник» колхоз кăçал 120 тонна силос хывса хăварчĕ. Силос хывас ĕçре комсомолецсемпе çамрăксем уйрăмăнах тăрăшса ĕçлерĕç. Çамрăксемпе комсомолецсен бригади 60 тонна силос хывре.

Сулсене юсамалли уйăхлăх

Çулйĕрсене юсас ĕçе хăвăртлатмалла

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ çулйĕр уйăхлăхне июлĕн 10-мĕшĕччен тăсма йышăнчĕç. Паянхи куна республика çĕр чавас ĕçĕн планне 89,4 процент, чул кăлармалли плана 41,9 процент пурнăçларĕ. Елчĕк, Комсомольски, Первомайски районсем графика çак кунсенче пурнăçлаççĕ.

Хăшпĕр районсем çак ĕçе халĕ те организованно тытăнман-ха. Улатăр, Кувакино, Шăмăршă, Пăрачкав районĕсем чăпма çук юлса ĕçлеççĕ. Улатăр районĕн уйăхлăхра 35 лаша, Кувакино районĕн 39 лаша ĕçлемелле пулсан, халĕ пĕрре те ĕçлемеççĕ.

Пуринчен ытла çулйĕр ĕçĕнче хăйăр турттарассипе йывăç хатĕрлесси юлса пырать. Ку ĕнтĕ колхозсем çак ĕçсене лашасем яманнинчен килет.

Уйхирте хĕрÿллĕ ĕç пуçланасси те инçе юлмарĕ. Çак юлнă вăхăтпа тулли усă курса çулйĕрсене юсас ĕçе ăнăçлăн вĕçлер. Парти райкомĕсемпе райисполкомсен, ялсовет председателĕсемпе колхоз председателĕсен çак ĕçе большевикла ертсе пымалла.

Чугунçул валли вутă хатĕрлемелли фронтовой вунăкунлăх

Вутă хатĕрлес ĕçе вăйлатар

Июнĕн 28-мĕшĕ тĕлне республика чугунçул валли вутă хатĕрлемелли плана 56,2 процент, турттармалли плана 57,3 процент пурнăçларĕ. Ку ĕçре çуран 1,315 çын, лашапа 1,161 çын ĕçлеççĕ. Ишлей районĕ фронтовой вунăкунлăхри графика вутă хатĕрлес енĕпе 124,5 процент, турттарас енĕпе 121,4 процент тултарнă. Элĕк районĕ (райсовет исполкомĕн председателĕ Филимонов юлташ) вутă хатĕрлемелли плана 108,1 процент, турттармалли плана 113,4 процента çити пурнăçланă. Сĕнтĕр районĕ те вутă турттармалли плана 100,8 процент тултарнă. Анчах та кунта вăрман касас ĕç юлса пырать, июнĕн 28-мĕшĕ тĕлне ку тĕлĕшпе плана 36,9 процент çеç пурнăçланă.

Республикăра чугунçул валли вутă хатĕрлес ĕçре Шăмăршă, Кувакино, Хĕрлĕ Чутай районĕсем çителĕксĕр ĕçлесе пыраççĕ. Шăмăршă районĕ июнĕн 28-мĕшĕ тĕлне вутă хатĕрлес задание 20,9 процент, Кувакино районĕ 4,5 процент, Хĕрлĕ Чутай районĕ 55,8 процент çеç пурнăçланă.

ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсен çак ответлă ĕçе оперативно ертсе пымалла. Чугунçул валли вутă хатĕрлесе турттарас эрнелĕх, кăçалхи июлĕн 10-мĕшĕччен пырать. Çак вăхăт хушшинче кашни районăн вутă хатĕрлес ĕçре пур майсемпе те усă курса, задание тултарассишĕн кĕрешмелле. Вăрманта ĕçлеме çителĕклĕ таран ĕç вăйĕ парса тăмалла.

Ĕçе хăçан тытăнаççĕ-ши?

ÇĔМĔРЛЕ. Июнĕн 25-мĕшĕ. (Телефонпа). Чугунçул валли вутă хатĕрлемелли фронтовой вунăкунлăхра планпа çуран тата лашапа 76 çын ĕçлемелле, паянхи куна ку ĕçре 87 çын ĕçлет. Вунăкунлăхра районăн 3000 кубометр вутă хатĕрлемелле пулсан, июнĕн 25-мĕшĕ тĕлне 2,653 кубометр хатĕрленĕ, 2,614 кубометр турттарнă. «1-ое мая», «Подборное», Ленин ячĕпе тăракан колхозсем вунăкунлăхăн заданине 5 кунрах пурнăçларĕç. Çав вăхăтрах «Вперед» (председателĕ Долгов), «Большевик», «Комбинат» (председателĕ Кузьмин) колхозсем вутă хатĕрлеме тытăнман та. «Вперед» колхозăн фронтовой вунăкунлăхра 160 кубометр вутă турттармалла, паянхи куна нимĕн чухлĕ те турттарман. Долгов юлташ—манăн ытти нарядсем пурнăçланаймарĕç-ха, çавна пула ку ĕçе тытăнаймарăм, — тет.

Салам чăваш халăхне!

Пĕр чаçри чăваш боецĕсемпе командирĕсем янă çыру

Эпир, пĕр чаçри чăваш боецĕсемпе командирĕсем, отечественнăй вăрçă фронтĕнчен пĕтĕм чăваш ĕçхалăхне хĕрÿллĕ, боевой салам яратпăр!

Чăваш республики совет влаçĕн çулĕсенче калама та çук пысăк çитĕнÿсем турĕ. Чăваш халăхĕ, Октябрьти Социализмлă революциччен пусмăрпа пушă çеç курнăскер, Совет Союзĕнчи ытти пур халăхсен тăванлă çемьинче пĕр тан праваллă пулса тăрса, Сталинла пятилеткăсен çулĕсенче телейлĕ те çутă пурнăç курчĕ, культурăллă та пуян пурнăçпа пурăнма тытăнчĕ. Ахальтен мар эпир:

Пурăнмашкăн питĕ савăк,
Юрлама та пит аван,

тесе юрлаттăмăр юлашки çулсенче.

Ку телейлĕ пурнăçа пире совет влаçĕ панă, хамăрăн телее эпир коммунистсен партийĕ, аслă Сталин ертсе пынипе турăмăр.

Анчах та икĕ çул каялла этемлĕхĕн чи усал тăшманĕ-юнлă Гитлер хăйĕн тискер çарĕсемпе пирĕн чечекленекен Совет çĕршывĕ çине тапăнчĕ те, чăваш халăхĕн, Совет Союзĕнчи пур халăхсемпе пĕрле, алла хĕçпăшал тытмалла пулчĕ. Икĕ çул ĕнтĕ чăваш халăхĕн ывăлĕсем Совет Союзĕнчи тăванла халăхсен ывăлĕсемпе пĕрле хамăрăн таса Тăван Çĕршывшăн, хамăрăн телейшĕн, ирĕклĕхшĕн çапăçаççĕ.

Нумай паттăр ĕçсем турĕç чăваш халăхĕн юратнă ывăлĕсем çапăçу хирĕсенче. Тăшманпа хĕрÿллĕн çапăçнăшăн, Гитлерăн симĕс шинеллĕ вăрă-хурахĕсене ăнăçлă пĕтерсе пынăшăн, Совет Правительстви чăваш халăхĕн нумай ывăлĕсене чи пысăк наградăсем пачĕ.

Совет Союз Геройĕ ятне илнĕ хамăрăн чаплă ентешĕсен—Орлов, Габайдуллин, Васильев, Ефимов, Лаптев юлташсен ячĕсене халĕ кашни чăваш ĕççыннинех пĕлет, вĕсене пысăк хисепре тытать. Вĕсен нихăçан манмалла мар ĕçĕсене, çапăçури паттăрлăхĕсене мухтаса пирĕн поэтсем сăвăсемпе поэмăсем çыраççĕ, юрăçăсем вĕсем çинчен хаваслă юрăсем хываççĕ.

Пиншер чăваш боецĕсемпе командирĕсем Совет Союзĕн орденĕсемпе медалĕсене илчĕç. Ку ĕнтĕ—калама та çук пысăк чыс, пысăк хисеп, чаплă наградăсем.

Эпир те, пĕр чаçри боецсемпе командирсем, нимĕç захватчикĕсене хирĕç паттăррăн çапăçнăшăн Совет Правительствинчен пысăк наградăсем илтĕмĕр. Ку наградăсене илни пире пулас тăтăклă çапăçусенче тискер тăшмана хирĕç татах та вирлĕнрех, татах та çирĕпрех, иксĕлми хастарлăхпа çапăçма хавхалантарать.

Тăван чăваш халăхĕ! Эпир, санăн ывăлусем, чăваш боецĕсемпе командирĕсем, хамăрăн генилле çулпуçĕ, полководец Сталин юлташ каланă сăмахсене асрах тытатпăр:

«Тăшман поражени тÿсрĕ, анчах ăна çĕнтермен-ха. Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешÿ вĕçленмен-ха,—вăл татах та ытларах хĕрсе, саралса пырать».

Эпир, правительство наградине илнĕ чăваш боецĕсемпе командирĕсем, хамăрăн тăван çĕршывăн телейĕшĕн, хамăрăн вăя та, юна та, кирлĕ пулсан пурнăçа та хĕрхенмесĕр çапăçмашкăн тупа туса сăмах паратпăр!

Нимĕç оккупанчĕсене — вилĕм!
Сывă пултăр Совет Çĕршывĕн ирĕклĕхĕ!

Сывă пултăр Совет Союзĕнчи халăхсен тăванлăхĕпе пĕрлĕхĕ!
Сывă пултăр чăваш халăхĕ!

Хамăрăн чаплă çулпуçа, аслă полководеца, Сталин юлташа—мухтав!

Пĕр чаçри чăваш боецĕсемпе командирĕсем:

Капитан **И. Павлов** («Хĕрлĕ Çăлтăр» орденĕпе наградăланă), старши лейтенант **Б. Косолапов** (Отечественнăй Вăрçăн 1-мĕш степеньлĕ орденĕпе тата «За боевые заслуги» медальпе наградăланă), медицина службин лейтенанчĕ **Ф. Емельянов** («Хĕрлĕ Çăлтăр» орденĕпе наградăланă), медицина службин старши лейтенанчĕ **М. Григорьев** («За отвагу» тата «За боевые заслуги» медальсемпе наградăланă), старши лейтенант **Л. Агаков** («За боевые заслуги» медальпе наградăланă), красноармеец **Я. Смольков** («За отвагу» медальпе наградăланă), красноармеец **Паликов** («За отвагу» медальпе наградăланă), ефрейтор **Калмыков** («За боевые заслуги» медальпе наградăланă), сержант **А. Азюхин** («За боевые заслуги» медальпе наградăланă).

Пирĕн авиаци Орша чугунçул узелне тата Тамань портне тапăнни

Июнĕн 23-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиаци Орша чугунçул узелне тата Тамань портне тапăннă. Тăшман склачĕсем, эшелонĕсем тата пĕрле пустарăнса тăнă войскăсем çине бомбăсем пăрахнă. Пушарсем нумай тухнă. Пушар вăхăтĕнче вăйлă взрывсем пулнă. Пирĕн самолетсем пурте хăйсен базисене таврăннă.

Ют çĕршывсенче

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, июнĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: ĕнер Америка авиацийĕн йывăр бомбардировщикĕсем Афинăран хĕвеланăçнерехре выртакан Элевсинри тата Афинăран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре выртакан Харсаньри аэродромсем çине бомбăсем пăрахнă. Элевсинра бомбăсем виçĕ пысăк ангар çине тÿрремĕнех пырса ÿкнине палăртнă, çав ангарсенчен пĕрне вут хыпса илнĕ. Тепĕр ангарĕнчен тĕтĕм çÿлелле явăнса хăпарни курăннă. Çавăн пекех тата бомбăсем аэродром территорийĕ çинчи служебнăй çуртсем сывăхĕнче те çурăлса кайнă. Хассеньре бомбăсем икĕ ангар çине те тÿррремĕнех пырса ÿкнине палăртнă, вĕсен территорийĕнче пушар тухнă. Çĕр çинче выртакан 5 самолета вут хыпса илнĕ. Ангарсенчен çурçĕр хĕвелтухăçнерехре тата аэродромран хĕвеланăçнерехре урăх пушарсем тухнă. Çак икĕ тапăнура та союзниксен авиацийĕ тăшман истребителĕсемпе çапăçнă.

Ĕнер Англин инçене вĕçекен истребителĕсем Грецин хĕвеланăç çыранĕсем патĕнчи Левкас утравĕнчен çурçĕрелле выртакан тăшманăн транспорт суднине атакăланă.

Июнĕн 27-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле «Веллингтон» йышши бомбардировщиксем Неаполе тапăннă. Доксен районĕ çине тата промышленность объекчĕсем çине бомбăсем тĕл пырса ÿкнине палăртнă.

Июнĕн 28-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи истребителĕсем Франци территорийĕ çине шала çитичченех кĕрсе кайнă та тăшман аэродромне тата чугунçул çинчи икĕ сортировочнăй станцие атакăланă.

Июнĕн 28-мĕшĕнче ирхине Англи самолечĕсем Голланди çыранĕсем патĕнче противник суднисене атакăланă. Икĕ суднăна шыва путарнă, виççĕшне сиенленĕ.

АНГЛИПЕ США ХАЛĂХĔСЕМ СТАЛИНГРАД ХАЛĂХНЕ ПУЛĂШАÇÇĔ

ЛОНДОН, июнĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Союзне пулăшса тăрас тĕлĕшпе ĕçлекен Пĕрлешÿллĕ Комитет пуçарса янипе Англи халăхĕ хушшинче Сталинград хулинче госпиталь туса лартма укçа-тенкĕ пухас ĕç анлăн саралса пырать. Çак кампание организацилес ĕçе Англи халăхĕн тĕрлĕ сийĕсен представителĕсем хутшăннă. Ку кампани Англи халăхĕ Сталинграда хÿтĕленĕ геройсене пĕтĕм чунтан юратса пулăшас шухăш-кăмăлпа пулса пырать. Çапла, Момутширте ку кампание 42,000 рабочи хутшăннă.

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Американецсен ĕç федерацийĕ, Нью-Йоркри производствăллă профсоюзсен тата независимăй профсоюзсен конгресĕ профсоюзсен членĕсем хушшинче пухнă укçа-тенкĕпе Сталинград халăхĕ валли госпиталь лартса пама йышăннă.

Нью-Йоркра пулса иртнĕ митингра çĕвĕçсен пĕрлешÿллĕ союзĕн председателĕ Хиллмэн сăмах тухса каланă. Вăл хăйĕн сăмахĕнче çапла каланă: Нью-Йорк хулинчи профсоюзсен членĕсем çав ĕç валли хăйсем хушшинче 250 пин доллар укçа пухма йышăнчĕç, тенĕ.

МЭРРЕЙПА ГРИН РУЗВЕЛЬТ ПАТНЕ ЯНĂ ПОСЛАНИ

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Америкăри ĕç федерацийĕн председателĕ Грин тата производствăллă профсоюзсен конгресĕн председателĕ Мэррей Рузвельт патне çырусем янă. Çав çырусенче вĕсем вăрçă вăхăтĕнче забастовкăсем тума чаракан законопроекта президент пăрахăçланине пĕтĕмпех ырлаççĕ. Хăйсен çырăвĕсенче Гринпа Мэррей Рузвельта пулăшса пыма тата тепĕр хут сăмах параççĕ, забастовкăсем тăвасран чарăнса тăма пулаççĕ.

Грин хăйĕн çырăвĕнче çакна кăтартса парать: профсоюзсем «конгрес, президент пăрахăçланипе килĕшмесĕр, питех те васкаса тунă ĕçсенчен профсоюзсем тĕлĕнсе кайрĕç», — тесе çырать Грин.

Çавăн пекех Мэррей та хăйĕн çырăвĕнче çакна кăтартса парать: производствăллă профсоюзсен конгресĕ забастовкăсем тума чаракан закон усăнах кăларса тăратакан «хăрушлăха» сирсе яма тăрăшать, тенĕ.

ЮГОСЛАВИ ПАРТИЗАНĔСЕН ÇĔНĔ ÇИТĔНĔВĔСЕМ

СТАМБУЛ, июнĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта çитнĕ сведенисем тăрăх, май уйăхĕн варринче Италипе Германи войскисем Усташа войскисемпе пĕрле Черногорире, Герцеговинăра тата Санжакра кĕрешекен Югослави партизанĕсен вăйлă отрячĕсене хирĕç пысăк наступлени пуçласа янă пулнă.

Оккупантсем çапăçăва темиçе дивизи тата çĕре яхăн самолет кĕртсе янă. 40 кун хаяр çапăçусем пынă. Фашистсен войскисем çынсем тĕлĕшпе те техника тĕлĕшĕпе те пысăк çухатусем тÿснĕ. Вара оккупантсен наступленийĕ пĕтĕмпех пĕчĕкленсе ларнă. Оккупантсем малтан партизансене виçĕ рет çавăрса илнĕ пулнă. Партизансем унтан Пива юханшывĕ çинче, Сулевка юханшывĕ патĕнче тата Фоча—Калиновик участокĕнче татса тухнă та çĕнĕ позицисем йышăннă. Халĕ вĕсем оккупантсемпе Власеницăпа Соколац ятлă халăх пурăнакан пунктсем патĕнче çапăçаççĕ, оккупантсене тапăнса пыраççĕ.

ИТАЛИ ХУЛИСЕНЧЕ ВЫРĂНТИ ХАЛĂХПА НИМĔÇСЕМ ХУШШИНЧЕ ТЫТĂÇУСЕМ ПУЛСА ИРТНĔ

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). США-ри информаци бюровĕ çапла пĕлтерет: шанчăклă çынсем каланă тăрăх, Милан хулинче нумаях пулмасть вырăнти халăхпа нимĕç салтакĕсем хушшинче темиçе хут та тытăçусем пулса иртнĕ. Тытăçусем итальянецсем нимĕçсене курайманнипе пуçланса кайнă. Юлашки вăхăтра итальянецсем нимĕçсене пушшех курайми пулса кайнă, мĕншĕн тесессĕн нимĕçсем хулара продовольстви питĕ сахаллине пăхмасăрах ăна хуларан турттарса тухаççĕ. Халĕ хулари лару-тăру питех те сивĕчленсе кайнă. Çавăнпа Итали çар влаçĕсем приказ кăларнă. Çав приказ тăрăх, нимĕç салтакĕсем хулара влаççем кăтартса панă урамсем тăрăх кăна çÿреме пултараççĕ.

Италири тата ытти хуласенче те чылайĕшĕнче вырăнти халăхпа нимĕç салтакĕсем хушшинче çавăн пек тытăçусем пулса иртнĕ.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕН ТЫЛĔ ÇИРĔП МАР

СТАМБУЛ, июнĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Турксен «Тан» ятлă хаçачĕн редакторĕ Сертель, Германирен килнĕ çынсем каласа панă сведенисем тăрăх, çапла пĕлтерсе çырать: Германире выçлăх тата халăх шухăш-кăмăлĕ пăсăлни вăйлăланса пыраççĕ. Чылай вырăнсенче халăх магазинсене çĕмĕрни пулнă. «Германири лару-тăру çинчен,— тесе çырать Сертель — Германипе Швейцари чикки патĕнчи Констанц хулинчи пурнăç тăрăх лайăх чухласа пăлме пулать. Ку хулара ÿссе çитнĕ арçын юлман, мĕншĕн тесен пурне те çара илнĕ. Вара çавсем нумайăшĕ Сталинград патĕнче Паулюс çарĕпе пĕрле пĕтнĕ. Лавккасемпе магазинсене нумайĕшне хупнă, мĕншĕн тесен вĕсен хуçисене тата унти служащисене «тотальнăй мобилизаци» йĕркипе çара илнĕ. Гитлерла чиновниксем продовольстви карточкисене валеççĕ, хăйсем валли продуктсем хатĕрлесе хураççĕ».

Сертель хăйĕн статьине çапла çырса пĕтерет: Германин ытти хулисенчи лару-тăру та Констанц хулинчинчен лайăхах мар, тет.

КĔСКЕН

▲ Италире юлашки вăхăтра полици 11,000 çын ытла арестленĕ. Арестленисем хушшинче государство учрежденийĕсенче ĕçленĕ чиновниксем нумай. Вĕсене «Италин поражени тÿсмелле пулать пулĕ» текен шухăш-кăмăла палăртнăшăн айăплаççĕ.

▲ Тури Савойя тăвĕсенче партизансем патне таракан çамрăк французсемпе Итали оккупаци войскисен отрячĕсем хушшинче тытăçусем пулса пыраççĕ. Аннемасра (Тури Савойя) оккупантсемпе кĕрешме чĕнекен листовкăсем нумай саланă.

▲ Ницце хулинче француз патриочĕсем итальянецсен 3 офицерне вĕлернĕ. Çавăншăн оккупантсем хулари халăх çине 3 миллион франк штраф хунă тата каçхине 9 сехет иртсен урама тухма чарса лартнă.

▲ Матинике утравĕ çинче, Виши правительствине пăхăнса тăракан губернаторăн адмирал Роберăн ĕçĕсене хирĕçлесе, пысăк хумханусемпе демонстрацисем пулса иртнĕ. Демонстрацие тăвакан халăх утрав çинчи пĕтĕм влаçа Француз нацине ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен Комитет представителĕсен аллине пама ыйтнă.

▲ Француз нацине ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен Комитет председателĕ де Голль генерал Туниса пынă.

▲ Турцире çак кунсенче çĕр чĕтренĕ. Пĕр Адапазары ятлă хулара кăна 500 çын вилнĕ. Хулари çуртсенчен 80 процентне ытла ишĕлсе аннă. Анчах ытти çуртсенче те пурăнма хăрушă. Вĕсем те çав таранах сиенленнĕ. Халăх чатăрсем айĕнче пурăнать. Адапазары районĕпе юнашар ларнă Будуклар тата Ташлык ятлă ялсем йăлтах ишĕлсе пĕтнĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Искусство ĕçĕсен Управленийĕ чăвашсен опера студине вĕренме кĕрес текенсенчен заявленисем илессине çак çулхи июль уйăхĕн 20-мĕшĕччен тăсни çинчен пĕлтерет.

Студине кĕмелли испытанисем июль уйăхĕн 25-мĕшпе 26-мĕш числисенче пулаççĕ.

Росглаввинон Шупашкарти эрех комбинатне районсенче пахча-çимĕçсемпе çырласем илсе хатĕрлеме уполномоченнăйсемпе агентсем кирлĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Коммунальнăй слобода, 21-мĕш номерлĕ çурт. Тел. 1—73, пĕр звонок.
5—1

Шупашкарти макарон фабрикине экономист-плановик кирлĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.